## Пирĕн календарь

# Чăваш АССР Конституцине йышăнни

Аслă Октябрь чăваш халăхне пысăк телей кӳчĕ. Социализм тунă тапхăрта республикăри ялсемпе хуласем тĕпрен улшăнса çĕнелчĕç. Чăваш халăхĕ социализмла наци пулса тăчĕ.

Иккĕмĕш пилĕкçуллăх вăхăтĕнче (1933—1937 çулсем) Чăваш республикин ӳсĕмĕсем уйрăмах палăрнă. Республикăри çулсене лайăхлатас тата вĕсене çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе чăвашсем çĕршывĕпе чапа тухнă.

Республикăра промышленность хăвăрт аталанса пынă. Ялхуçалăхĕнче коллективизаци юхăмĕ сарăлнă. Республика тунă çитĕнӳсене шута илсе, СССР Тĕп Ĕçтăвкомĕн Президиумĕ 1935 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче Чăваш республикине Ленин орденĕпе наградăласси çинчен постановлени йышăннă.

Социализм тăвас ĕçре совет халăхĕ тĕнчипе паллă историллĕ çитĕнӳсем тунине СССР Конституцийĕнче çирĕплетнĕ. СССР тата РСФСР Конституцийĕсене тĕпе хурса, Чăваш АССР Конституцине туса хатĕрленĕ. Унăн проектне республикăри пĕтĕм халăх хавхаланса сӳтсе явнă. 1937 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнче Чăваш республикинчи Советсен черетсĕр съезчĕ çĕнĕ Конституцие çирĕплетнĕ.

Çак тĕп Законта кăтартнă тăрăх, Чăваш АССРĕнчи пĕтĕм власть ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем урлă хулапа ял ĕçсынниййĕсен аллинче тăрать.

Чăваш республикинчи граждансен ĕçлев, кану, вĕренӳ, ватăлсан, çавăн пекех чирлесен е ĕçлейми пулсан, пулăшу илмелли правăсем пур. Республикăри граждансем, вĕсен национальноçĕпе расине пăхмасăр, пурте пĕр тан. Конституцире хĕрарăмпа арçын хушшинчи пĕртанлăх прависене те çирĕплетнĕ.

Конституци республикăн гербне, флагне тата тĕп хулине (Шупашкар) çирĕплетнĕ.

30 çул хушши ĕнтĕ, çак чаплă Конституцире панă правăсемпе усă курса, республикăри ĕçсыннисем мĕнпур совет халăхĕпе пĕрле çĕнĕ обществă тăвас çулпа хăюллăн утаççĕ.

**Н. ИВАНОВ.**

**Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев институчĕн сотрудникĕ.**